26-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1943
ФЕВРАЛЬ
23
ЫТЛАРИКУН
43(6280) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

Нимĕç захватчикĕсене хирĕç паттăррăн кĕрешекен Хĕрлĕ Çар сывă пултăр!

Хĕрлĕ Çар 25 çул тултарнă тĕле ВКП(б) Центральный Комитечĕ кăларнă ЛОЗУНГСЕМ

1. Пирĕн тăван çĕршывăн ирĕклĕхĕшĕн, ирĕклĕхĕшĕн тата никама пăхăнманлăхĕшĕн, фашистла нимĕç захватчикĕсене хирĕç паттăррăн кĕрешекен Хĕрлĕ Çар сывă пултăр!

Хĕрлĕ Çар çирĕм пилĕк çул тултарнине тăшмана хирĕç кĕрешсе çĕнĕ çĕнтерӳсем тунипе паллă тăвар!

2. Фашистла нимĕç захватчикĕсене çĕнтерме çирĕп никĕс туса хунă аслă совет халăхĕ, унăн паттăр Хĕрлĕ Çарĕ тата Тинĕс-Çар Флочĕ сывă пултăр!

Нимĕç оккупанчĕсене пĕтĕмпех çĕмĕрсе тăкассишĕн — малалла!

3. Юлташсем — красноармеецсем, краснофлотецсем, командирсемпе политработниксем, партизансемпе партизанкăсем! Сирĕн умма ирĕклĕхшĕн кĕрешес аслă задача тухса тăчĕ. Сак задачăна тивĕçлипе пурнăçа кĕртсе пырăр, — фашистла нимĕç мерзавецĕсене пĕр шеллемесĕр пĕтерсе пырăр!

4. Совет çĕршывĕшĕн пыракан çапăçăва Совет Союзĕнчи мĕнпур халăхсен ывăлĕсем кĕреççĕ. Сывă пултăр Хĕрлĕ Çар—СССР халăхĕсен тăванлăхĕпе туслăхĕн çарĕ.

5. Хĕрлĕ Çарăн паттăр воинĕсем! Тăван çĕршыв Сирĕн чаплă çĕнтерӳсемпе мухтанать! Фашистла нимĕç вăрă-хурахĕсене татах та вăйлăнрах пыра-пыра çапăр! Тăван çĕре гитлерла ирсĕрсенчен тасатăр!

6. Халăхсене пусмăрлăхран хăтаракан тата вĕсене гитлерла тирание хирĕç кĕрешме хавхалантаракан Хĕрлĕ Çар сывă пултăр!

7. Этемлĕхĕн ирсĕр тăшманĕсене — нимĕçсен фашистла пусмăрçисене Совет Союзĕпе Англин тата Америкăн боевой союзĕ çĕнтересси сывă пултăр!

8. Фашистла нимĕç захватчикĕсене, вĕсен государствине, вĕсен çарне, вĕсен «Европăри çĕнĕ йĕркине» ылхав та вилĕм!

9. Хĕрлĕ Çарăн командирĕсем! Çар искусствине тимлĕн вĕренсе алла илĕр! Çар чаçĕсемпе соединенисен çапăçури пултарулăхне ывăнма пĕлмесĕр ӳстерсе пырăр, тĕрлĕ войскăсем пĕр-пĕринпе çыхăнса вăрçас ĕçе лайăх вĕренсе çитĕр, войскăсене ертсе пырас ĕçĕн мастерĕсем пулăр!

10. Хĕрлĕ Çарăн воинĕсем! Хăвăрăн хĕçпăшала лайăх вĕренсе çитĕр, хăвăрăн ĕçĕн мастерĕсем пулса тăрăр, фашистла нимĕç захватчикĕсене вĕсене пĕтĕмпех пĕтерсе тăкичченех вăйлăн пыра-пыра çапăр!

11. Хĕрлĕ Çарăн воинĕсем! Çирĕп йĕркеллĕ пулни тата тимĕр пек çирĕп дисциплина — эпир тăшмана çĕнтерессин условийĕсем пулса тăраççĕ. Хамăрăн çарти дисциплинăпа йĕркелĕхе пур майсемпе те тĕреклетсе пырăр!

12. Хĕрлĕ Çарăн воинĕсем! Сире, ирĕке кăларакансене, нимĕçсен фашистла пусмăрĕ айĕнче асапланакан миллионшар совет çыннисем кĕтеççĕ. Хĕвелапăçнелле — малалла, Совет çĕрне ирĕке кăларма!

13. Пирĕн хуласемпе ялсене çаратса тата аркатса пĕтернĕшĕн, совет çыннисене вĕлернĕшĕн тата нимĕç чуралăхне илсе кайнăшăн, хĕрарăмсемпе ачасенчен мăшкăлланăшăн фашистла нимĕç мерзавецĕсене пĕтерсе тăкса тавăрар!

Юншăн юн! Вилĕмшĕн вилĕм!

14. Хĕрлĕ Çарăн пехотинецĕсем! Нимĕçсемпе вĕсен хӳрешкисене Совет çĕрĕ çинчен хăваласа кăларăр! Тăшман войскисене йĕрлесе пырса пĕтере-пĕтере тăкăр! Нимĕç захватчикĕсене çавăра-çавăра илсе тыткăна илĕр, тыткăна парăнма килĕшмесçĕ пулсан — вĕсене пĕтерсе тăкăр!

Сывă пулччăр совет пехотинецĕсем!

15. Совет летчикĕсем — пирĕн тăван çĕршывăн соколĕсем!

Тăшмана сывлăшра та, çĕр çинче те, тинĕсре те пĕр шеллемесĕр çĕмĕрсе пырăр!

Сывă пулччăр совет летчикĕсем!

16. Хĕрлĕ Çарăн танкисчĕсем! Тăшмана хăюллăн пĕтерсе пырăр! Хамăрăн пехотăна наступлени тума пулăшăр! Тăван çĕршыва нимĕç захватчикĕсенчен ирĕке кăларăр!

Сывă пулччăр совет танкисчĕсем!

17. Хĕрлĕ Çарăн артиллерисчĕсемпе минометчикĕсем! Хăватлă вут-çулăм тăкса тăшманăн укреплениййĕсене, хирĕç тăмалли узелĕсемпе тĕреклетнĕ пункчĕсене аркатăр! Противникăн салтакĕсемпе техникине пĕтерсе пырăр!

Сывă пулччăр совет артиллерисчĕсемпе минометчикĕсем!

18. Хĕрлĕ Çарăн механизациленĕ чаçĕсемпе соединениййĕсенчи боецсем, командирсемпе политработниксем! Тăшман войскисене хăвăрт хăваласа пырăр, вĕсене хирĕç татăклăн кĕрешсе, çавăра-çавăра илĕр тата çĕмĕрсе тăкăр!

Сывă пулччăр Хĕрлĕ Çарăн механизациленĕ чаçĕсемпе соединениййĕсем!

19. Хĕрлĕ Çарăн кавалерисчĕсем! Паттăр казаксемпе хăюллă джигитсем! Тăшман войскисен ăшне хăюллăн та татăклăн кĕре-кĕре кайăр, нимĕçсен фашистла ирсĕрĕсене пĕтере-пĕтере тăкăр!

Сывă пулччăр совет конникĕсем!

20. Тинĕс-Çар Флотĕнчи краснофлотецсем, командирсемпе политработниксем! Тăшмана вăйлăнрах пыра-пыра çапăр! Тăшманăн карапĕсемпе транспорчĕсене аркатса тăкăр! Гитлерла захватчиксене пĕр шеллемесĕр пĕтерсе пырăр!

Сывă пулччăр совет морякĕсем!

21. Хĕрлĕ Çарăн автоматчикĕсем! Фашистла нимĕç вăрă-хурахĕсене хăватлăнрах пыра-пыра çапăр! Автоматсенчен персе тăшман çине вут тăкăр! Нимĕçсене кăнтăрла та, çĕрле те канăç ан парăр!

Сывă пулччăр совет автоматчикĕсем!

22. Хĕрлĕ Çарăн разведчикĕсем! Нимĕçсен тылĕнче хăюллăн кĕрешĕр! Тăшман ăçта вырнаçса тăнине тата унăн вăйĕсене тупса палăртăр, унăн ĕмĕчĕсемпе шухăшĕсене туйса илĕр. Пирĕн войскăсене ăнăçлăн наступлени тума пур майсемпе те пулăшăр!

Сывă пулччăр советăн хăюллă разведчикĕсем!

23. Хĕрлĕ Çарăн связисчĕсем! Лайăх çыхăну — тăшмана çĕнтерес ĕçре питех те кирлĕ услови пулса тăнине асра тытăр! Хĕрлĕ Çарти çыхăну ĕçне пĕтĕм вăйпа лайăхлатса пырăр!

Сывă пулччăр совет связисчĕсем!

24. Инженерла-саперла войскăсен боецĕсем, командирĕсемпе политработникĕсем! Ылханлă тăшмана çĕмĕрсе пыма наступлени тăвакан войскăсене вăйлăн пулăшăр!

Сывă пулччăр Хĕрлĕ Çарăн инженерла-саперла чаçĕсем!

25. Сывă пулччăр пирĕн мухтавлă пограничниксем, совет çĕршывĕн чиккисене шанчăклăн хӳтĕлекенсем!

26. Хĕрлĕ Çарăн медицина работникĕсем! Врачсем, медсестрасем, санитарсем! Аманнă совет воинĕсен пурнăçĕ тата вĕсем строя тавăрăнасси эсир вăя шеллемесĕр ĕçленинчен килсе тăнине асра тытăр!

Сывă пулччăр Хĕрлĕ Çарăн медицина работникĕсем!

27. Хĕрлĕ Çарăн гвардеецĕсем! Гвардин мухтавлă Ялавĕсене чыслăн тытса пырăр! Наступленире паттăрлăхпа хăюлăхăн, дисциплинăллă тата çирĕп пулнин, тăшмана вăйлăн та хăвăрт хĕссе пынин примерне кăтартса парăр!

Сывă пултăр Совет Гвардийĕ!

Гвардин мухтавлă ялавĕсене чыслăхне, ирĕклĕхне, никама пăхăнманлăхне паттăррăн хӳтĕлекен Отечественнăй Аслă вăрçă геройĕсене мухтав!

29. Сыгă пулччăр Хĕрлĕ Çарăн мухтавлă генералĕсем, нимĕç захватчикĕсене çĕнтерме хамăрăн войскăсене ертсе пыракансем!

30. Ленинграда, Одессăна, Севастополе тата Сталинграда паттăррăн хӳтĕлекенсене, вĕçĕ-хĕррисĕр хăюллă, тимĕр пек çирĕп дисциплинăллă тата чăтăмлă пулнин, тăшмана çĕнтерме пултарнинчи лайăх тĕслĕхĕсене кăтартса панăскерсене, мухтав!

31. Сталинград патĕнче тăшман войскисене хупăрласа илсе пĕтерсе тăкас ĕçе ăнăçлăн пурнăçа кĕртнĕ Хĕрлĕ Çарăн паттăр воинĕсене чыс та мухтав!

(Юлашки 2-мĕш страницăра).

Совет Информаци Бюровĕнчен

Февралĕн 21-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерӳ

Февралĕн 21-мĕшĕнче пирĕн войскăсем Донбасра Боково-Антрацит хулипе чугунçул станцине, çавăн пекех тата Верхний Нагойчик, Нижний Нагойчик ятлă халăх пурăнакан пысăк пунктсене тата ытти темиçе пункта тытса илнĕ.

Фронтăн ытти участокĕсенче пирĕн войскăсем малтанхи енчеллех çапăçса пынă.

Иртнĕ эрнере, февралĕн 14-мĕшĕпе 20-мĕшĕ хушшинче, сывлăшри çапăçусенче тата аэродромсенче нимĕçсен 276 самолетне пĕтерсе тăкнă. Çав вăхăт хушшинче пирĕн 101 самолет пĕтнĕ.

* * *

Февралĕн 20-мĕшĕнче пирĕн авиаци чаçĕсем фронтăн тĕрлĕ участокĕсенче нимĕçсен войскăсемпе грузсем турттарса пыракан 200 автомашинине çити пĕтерсе тăкнă, артиллерин 10 батарейине тата минометсен 15 батарейине пусарса лартнă.

* * *

Дон çинчи Ростовран хĕвеланăçнерехре пирĕн войскăсем тăшман хирĕç тăнине çĕнтерсе малалла куçса пынă. Н-ски часть сасартăк пырса çапса нимĕçсене оборонăн вăйлă тĕреклетнĕ узелĕнчен хĕссе кăларнă. Çапăçу хирĕнче тăшманăн 300 вилли ытла выртса юлнă. Нимĕçсен 2 танкне пĕтерсе тăкнă, 16 пулемет, 180 винтовка тата ытти трофейăсем те тытса илнĕ.

* * *

Ворошиловградран кăнтăр-хĕвеланăçнерехри районра пирĕн чаçсем малалла тапăнса пырса халăх пурăнакан темиçе пункта тытса илнĕ. Çав пунктсенчен пĕриншĕн пынă çапăçура тăшман пехотине пĕр батальона çити пĕтерсе тăкнă. 3 танк, 8 оруди, 22 пулемет тата ытти трофейăсем те тытса илнĕ.

* * *

Краматорская хулинчен кăнтăраллараха пирĕн войскăсем наступлениллĕ çапăçусем туса пынă, вĕсен пĕр пайĕ тăшманăн контратакисене сирсе тăнă. Пĕр участокра нимĕçсем пехота тата танксем нумай пухса тăратнă та темĕн пысăкĕш çухатусем тӳссе те пулин хăйсен çухатнă позицийĕсене каялла тавăрма тăрăшаççĕ. Çапăçусем питех те хаяррăн пулса пыраççĕ. Пирĕн боецсем тăшманăн контратакисене сирсе янă, ăна çынсемпе техника тĕлĕшĕнчен пысăк çухату тӳстернĕ. Пĕр рабочи поселок районĕнче Н-ски чаçăн артиллерисчĕсемпе бронебойщикĕсем нимĕçсен 7 танкне персе çĕмĕрнĕ тата мотопехота ларса пыракан 16 автомашинăна пĕтерсе тăкнă. Тепĕр участокра пирĕн боецсем 11 танк, 2 бронемашина пĕтерсе тăкнă, нимĕçсен 300 автоматчикне ытла вĕлернĕ.

* * *

Курскран çурçĕреллерехре Н-ски часть хаяррăн çапăçса нимĕçсен 200 салтакĕпе офицерне çити пĕтерсе тăкнă, тăшманăн 3 танкне персе çĕмĕрнĕ е çунтарса янă. Тепĕр участокра пирĕн танксемпе моторизованнăй пехота тăшманăн тылне кĕрсе кайнă та халăх пурăнакан пĕр пунктра вырнаçнă нимĕçсене сасартăк атакăланă. Совет боецĕсем гитлеровецсен ротине пĕтерсе тăкнă. 4 противотанковăй оруди, 12 автомашина, боеприпассен 2 складне, япаласен складне тата тĕрлĕ грузсем тиенĕ 30 лава тытса илнĕ.

* * *

Краснодартан хĕвеланăçнерехре, тăшман вăйлăн хирĕç тăнине çĕнтерсе, халăх пурăнакан темиçе пункта тытса илнĕ. Ильская чугунçул станцин районĕнче совет чаçĕсем 17 пулемет, 2.000 винтовка, 12.000 снаряд, 200.000 винтовка патронĕ, 6 паровоз, 110 вагон тата 40 автомашина тытса илнĕ. 200 салтакпа офицера тыткăна илнĕ.

* * *

Февралĕн 10-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн авиаци Орел облаçĕнчи пĕр хулари тăшман казарми çине бомбăсем пăрахнă. Нимĕç гарнизонĕн салтакĕсем хăраса ӳксе пăтрашса кайнипе усă курса, Орел облаçĕнчи партизансен отрячĕ чугунçул станцине пырса кĕнĕ те унтан яма хатĕрлесе хунă çар эшелонне пĕтерсе тăкнă. Снарядсем тиенĕ 3 вагона, танксем тиенĕ 3 платформăна тата автомашинăсем тиенĕ 2 платформăна сирпĕнтерсе янă. Орел облаçĕнчи партизансен тепĕр отрячĕ тăшманăн эшелонне ӳпĕнтерсе янă. Крушение пула 40 оруди тата 30 танк сиенленнĕ.

* * *

Харьков хулинче 16 уйăх хушши фашистла пусмăрлăхра пурăннă çынсем питĕ йывăр асапсем курса иртнернĕ. Гитлеровецсем хулана аркатса тăкнă. Выçлăхпа, чирлесе тата нимĕç палачĕсем вĕлернипе темиçе пин çын вилнĕ. Нимĕç дивизин штабĕнче взрыв пулнă хыççăн (çав взрыв вăхăтĕнче пĕр нимĕç генералĕ вилнĕ) палачсем Харьковри мирлĕ пурăнакан 2.000 çынна ытла заложниксен шучĕпе тытса хупнă. Гитлеровецсем, пĕр кун хушшинче кăна 250 çынна персе вĕлернĕ, вуншар çынна балконсенчен, юпасенчен тата йывăçсенчен çакса вĕлернĕ. Каялла чакнă чухне гитлеровецсем хулари чи лайăх çуртсене, çар тĕлĕшĕнчен паха пулман çуртсенех пĕтерсе тăкнă. Бандитсем медицина институтне, Харьковри университета, Пионерсен двоçецне, «Спартак» тата «Интернациональная» гостиницăсене, обществăллă тата культурăллă ытти çуртсене нумай пĕтерсе тăкнă. Нимĕçсем ĕçлеме пултаракан çынсене пурне те вăйпа хăваласа кайма хăтланнă. Полицейскисем çынсене урамра, çуртсенче тытнă та вокзал патнелле сĕтĕре-сĕтĕре кайнă. Хирĕç тăраканнисене çавăнтах пере-пере вĕлернĕ.

Февралĕн 22-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерӳ

Февралĕн 22-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн войскăсем малтанхи еннеллех наступлениллĕ çапăçусем туса пынă.

* * *

Дон çинчи Ростовран хĕвеланăçнерехре пирĕн войскăсем малалла тапăнса пынă. Н-ски часть хаяррăн çапăçса нимĕçсен 200 салтакĕпе офицерне çити пĕтерсе тăкнă. 2 танк, 3 оруди, 140 винтовка тата 5 противотанковăй пăшал тытса илнĕ. Тепĕр участокра пирĕн моторизованнăй пехота гитлеровецсене халăх пурăнакан икĕ пунктран хĕссе кăларнă. Трофейăсем тытса илнĕ тата тыткăна илнĕ.

* * *

Ворошиловградран кăнтăр-хĕвеланăçнерехре пирĕн войскăсем, наступлениллĕ çапăçусем туса пырса, халăх пурăнакан темиçе пункта йышăнса илнĕ. Пĕр участокра тăшман хăйĕн çухатнă позицийĕсене каялла тытса илес тесе темиçе хут та контратака тунă. Н-ски чаçăн боецĕсем гитлеровецсен пур контратакисене те сирсе янă. Çапăçу хирĕнче тăшманăн персе çĕмĕрнĕ 6 танкĕ, 15 автомашини тата 5 противотанковăй орудийĕ выртса юлнă.

* * *

Красноармейское районĕнче пирĕн чаçсем тăшманăн хаяр контратакисене сире-сире янă. Пĕр участокра нимĕç танкĕсем пирĕн подразделенисем тăракан вырăна кĕрсе кайнă. Пирĕн артиллерисчĕсем нимĕçсен 12 танкне персе çĕмĕрнĕ е çунтарса янă. Тăшманăн ытти танкĕсем каялла кайма хăтланнă, анчах та пирĕн танксен засади çине пырса тăрăннă. Тата 5 танкне çухатсан, нимĕçсем вара хăйсен малтанхи позицийĕсем патне чакнă.

* * *

Курскран çурçĕреллерехре пирĕн войскăсем наступлениллĕ çапăçусем туса пынă. Тăшман васкаса çĕнĕ чаçсем илсе пырать те вĕсене çапăçăва кĕртсе ярать. Тăшманăн контратакисене сирсе тăрса, Н-ски чаçăн подразделениййĕсем нимĕçсен 800 салтакĕпе офицерне пĕтерсе тăкнă. Тепĕр участокра пирĕн çăмăллăн куçакан отрядсем халăх пурăнакан темиçе пункта тытса илнĕ тата тактика енчен пĕр паха шоссе çулне пӳлсе лартнă.

* * *

Краснодартан хĕвеланăçнерехре Н-ски соединенин чаçĕсем, малалла куçса пырса, халăх пурăнакан темиçе пункта тытса илнĕ. 6 оруди, 17 пулемет, 30 автомашина, грузсем тиенĕ 600 лав (лашисемпе пĕрлех), япаласен икĕ складне тата продовольствин 2 складне тытса илнĕ. Нимĕçсен 150 салтакĕпе офицерне тыткăна илнĕ.

* * *

Витебск облаçĕнчи районсенчен пĕринче кĕрешекен партизансен темиçе отрячĕ февралĕн 5-мĕшĕнчен пуçласа 11-мĕшне çитиччен нимĕçсен йышлăрах вăйĕсене хирĕç хаяррăн çапăçнă. Гитлеровецсем партизансене хирĕç пысăк çар чаçĕсем янă. Совет патриючĕсем пĕчĕк отрядсене уйăрăлса кĕрешсе, тăшмана флангсенчен тата тылран кĕтмен çĕртен пыра-пыра çапнă. Ултă кун хушшинчи çапăçусенче нимĕç пехотине 2 батальона çити пĕтерсе тăкнă.

* * *

Харьков облаçĕнчи Малиновка поселокĕнчи çынсем нимĕçсен фашистла ирсĕрĕсем тискер ĕçсем туни çинчен акт çырнă. Вăл актра çапла каланă: «Эпир нимĕç оккупанчĕсен пусмăрлăхĕнче 16 уйăх пурăнтăмăр. Нимĕçсем поселокри мĕнпур çынсене çаратрĕç, колхоз пурлăхне тустарса пĕтерчĕç. Çав вăхăт хушшинче гитлерла бандитсем Малиновкăран Германие каторгăлла ĕçе 800 çынна ытла хăваласа кайрĕç. Гитлерла каторгăран тарса таврăннă çынсем фашистла пусмăрлăха лекнĕ пирĕн ачасен, пиччĕсен, аппасен пурнăçĕ унта питех те начарри çинчен каласа параççĕ. Вĕсене хĕнеççĕ, выçăпа асаплантараççĕ тата вăй çитейми ĕçе ĕçлеттерсе халран яраççĕ. Малиновкăран чакас умĕн нимĕç салтакĕсем çĕрле пӳртсене кĕрсе çӳренĕ, мĕнпур арçынсене, ĕçлеме тесе, урама чĕнсе кăларнă. Тухнине пĕрне вара çавăнтах персе вĕлернĕ. Çавăн пек Илья Чепель, Николай Загребельный, Иван Юдин, Егор Перепелица, Федор Шуга, Григорий Касьянов, Иван Щербина тата ытти нумай колхозниксене персе вĕлернĕ. Эпир çак акта нимĕç бандичĕсен çав тискер ĕçĕсем çинчен Хĕрлĕ Çарăн боецĕсемпе командирĕсене тата пĕтĕм совет халăхне каласа парас тесе çыртăмăр. Мĕнпур совет çыннисене çав ултавлă та усал тăшмана пĕр шеллемесĕр пĕтерме чĕнетпĕр.

Хĕрлĕ Çар 25 çул тултарнă ятпа пулнă чаплă лару

Ĕнер Шупашкарта, Советсен Çурчĕн ларусем тумалли залĕнче, Хĕрлĕ Çар 25 çул тултарнă ятпа партипе совет тата общество организацийĕсен чаплă ларăвĕ пулчĕ.

Ларăва ВКП(б) Горкомĕн секретарĕ Романова юлташ уçрĕ.

Лару президиумĕнче — ВКП(б) Обкомĕпе горкомĕн бюро членĕсем, общество организацийĕсемпе Шупашкар гарнизонĕн представителĕсем.

Тăвăллăн алă çупса, лару хисеплĕ президиум суйларĕ, хисеплĕ президиума Верховнăй Главнокомандующине, аслă Сталина тата вăл ертсе пыракан Политбюро составне суйларĕç.

Хĕрлĕ Çар 25 çул тултарни çинчен подполковник Баркан юлташ доклад туса пачĕ.

Доклад хыççăн лару, тăвăллăн алă çупса, Верховный Главнокомандующи Сталин юлташ патне саламлă çыру яма йышăнчĕ.

Унтан шефа илнĕ полка çыру ячĕç.

Романова юлташ ларăва хупăннă тесе пĕлтерчĕ. «Аслă Сталина — урра!» тенĕ сасăсем, тăвăллăн алă çупни нумайччен пычĕ, оркестр «Интернационал» выляса ячĕ.

Лару хыççăн концерт пулчĕ.

Хĕрлĕ Çар 25 çул тултарнă тĕле ВКП(б) Центральный Комитечĕ кăларнă ЛОЗУНГСЕМ

(Юлашки. Пуçламăшĕ 1-мĕш страницăра).

32. Ленинград блокадине татса кĕнĕ Хĕрлĕ Çарăн войскисене хĕрÿллĕ салам! Сывă пулччăр ленинградецсем, тăван çĕршывăн мухтавлă патриочĕсемпе патриоткисем!

33. Тăвансем! Фашистла нимĕç мерзавецĕсен пусмăрĕ айне вăхăтлăха кĕрсе ÿкнĕ вырăссем, украинецсем, белоруссем, молдавансем, литовецсем, латышсем, эстонецсем, карелсем! Эсир ирĕке тухас сехет çывхарса килет. Фашистла захватчиксене пĕр шеллемесĕр пĕтерсе пырăр, пĕтĕм халăхăн партизанла юхăмне сарса ярăр!

34. Совет партизанĕсемпе партизанкисем! Противник тылĕсене аркатăр, унăн штабĕсене пĕтере-пĕтере тăкăр, чугунçулсемпе кĕперсене аркатăр, складсемпе казармăсене вут тивертсе тата сирпĕнтерсе ярăр, противникăн салтакĕсене вĕлере-вĕлере пĕтерĕр! Наступлени тăвакан Хĕрлĕ Çара пулăшас ĕçе кашни кунах вăйлатăр!

Пирĕн партизансемпе партизанкăсене — мухтав!

35. ССР Союзĕнчи граждăнсемпе гражданкăсене пурне те çар ĕçне вĕрентни пирĕн оборонăна тĕреклетет. Совет патриочĕсемпе патриоткисем! Çар ĕçне вĕренĕр! Тăван çĕршыва пултаруллăн хÿтĕлекенсем пулăр!

36. Пирĕн паттăр Хĕрлĕ Çара, пирĕн мухтавлă Хĕрлĕ Флота пулăшма хамăрăн пĕтĕм вăя парар! Халăхăн пĕтĕм вăйне — тăшмана çĕмĕрсе тăкма!» (Сталин).

37. Совет Союзĕнчи ĕççыннисем, фронтовиксен çемьисемшĕн тăрăшни — эсир пĕтĕм Хĕрлĕ Çаршăн тăрăшнин çуррийĕ пулса тăрать. Тăван çĕршыва хÿтĕлекенсен çемьисемшĕн пĕтĕм вăйпа тăрăшар!

38. Рабочисемпе работницăсем, инженерсемпе техниксем! Фронта пулăшас тĕлĕшпе ывăнма пĕлмесĕр ĕçлĕр! Наступлени тăвакан Хĕрлĕ Çара танксем, самолетсем, орудисем, минометсем, снарядсем, минăсем, пулеметсем, автоматсем, винтовкăсем ытларах парса тăрăр!

39. Колхозниксемпе колхозницăсем, МТС-семпе совхозсенчи рабочисемпе работницăсем! Нимĕç пусмăрçисене çĕмĕрсе тăкма Хĕрлĕ Çара пулăшăр! Фронт валли ытларах апат-çимĕç парăр! Пĕтĕм вăя — тăшмана çĕмĕрсе тăкма!

40. Чугунçул транспортĕнчи работниксем! Чугунçулсене пĕр чăрмавсăр, тĕрĕс ĕçлеттерессишĕн кĕрешĕр! Войскăсемпе çар грузĕсем тиенĕ транспортсене хăвăрт çÿретес ĕçе организацилĕр! Пирĕн войскăсене наступлени тума пулăшăр!

41. Совет интеллигенцийĕ! Совет учрежденийĕсен работникĕсем, инженерсем, учительсем, агрономсем, врачсем, наука тата искусствăпа литература работникĕсем! Хамăрăн пĕтĕм вăйна пĕлĕве фашистла нимĕç пусмăрçисене хирĕç кĕрешес ĕçе парар!

42. Хăйсен перекетленĕ укçитенкине Хĕрлĕ Çар валли танксем, самолетсем, орудисем тума паракан совет патриочĕсемпе патриоткисене хĕрÿллĕ салам!

43. Совет хĕрарăмĕсем! Арçынсен профессийĕсене вĕренсе алла илĕр, фронта кайнă арçынсем вырăнне тăрса ĕçлĕр! Сывлăшран тапăннинчен тата химиллĕ тапăнуран хÿтĕленес ĕçе, санитарипе çыхăну ĕçне вĕренĕр! Нимĕç захватчикĕсене хирĕç кĕрешме хамăрăн пĕтĕм вăя парар!

44. Совет çамрăкĕсемпе хĕрĕсем! Фронта пулăшас тĕлĕшпе вăя шеллемесĕр ĕçлĕр, производство техникине вĕренсе алла илĕр, ĕç дисциплинин примерне кăтартăр, çар ĕçне ывăнма пĕлмесĕр вĕренĕр!

Сывă пулччăр совет çамрăкĕсем!

45. Нимĕç оккупанчĕсенчен ирĕке кăларнă хуласемпе ялсенчи ĕççыннисем! Наступлени тăвакан Хĕрлĕ Çара пĕтĕм вăйпа пулăшăр! Промышленноçпа ялхуçалăхне хăвăртрах ура çине тăратăр!

46. Коммунистсемпе комсомолецсем! Фашистла нимĕç захватчикĕсене хирĕç кĕрешекенсен малти речĕсенче пулăр!

47. Сывă пултăр пирĕн мухтавлă Совет çĕршывĕн ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхĕ!

48. Сывă пултăр Пĕтĕм Союзри Коммунистсен (большевиксен) партийĕ, Ленин — Сталин партийĕ — нимĕç захватчикĕсене çĕнтерессишĕн пыракан кĕрешÿ организаторĕ!

49. Ленин ялавĕпе, Сталин ертсе пынипе — малалла, нимĕç оккупанчĕсене çĕмĕрсе тăкма тата вĕсене хамăрăн Тăван çĕршывран хăваласа кăларма!

ПĔТĔМ СОЮЗРИ КОММУНИСТСЕН (БОЛЬШЕВИКСЕН) ПАРТИН ЦЕНТРАЛЬНЫЙ КОМИТЕЧĔ.

1-мĕш степеньлĕ Суворов орденĕн кавалерĕ, Совет Союзĕн Маршалĕ Г. К. ЖУКОВ.

1-мĕш степеньлĕ Суворов орденĕн кавалерĕ, артиллери Маршалĕ, Н. Н. ВОРОНОВ.

1-мĕш степеньлĕ Суворов орденĕн кавалерĕ, генерал-полковник К. К. РОКОССОВСКИЙ.

1-мĕш степеньлĕ Суворов орденĕн кавалерĕ, авиацин генерал-полковникĕ, А. А. НОВИКОВ.

Пирĕн землянсем

Чăваш халăхĕн шанчăклă ывăлĕ

Шăхасан районĕнчи «Красный Октябрь» колхоз членĕ комсомолец Лев Михайлович Михайлов Хĕрлĕ Çар ретне 1939 çулта кайнă. Çара кайнă чух вăл çакăн пек сăмах pană:

— Эпĕ, Хĕрлĕ Çар ретне тăрса, тăван çĕршывăн ирĕклĕхĕшĕн, телейĕшĕн паттăррăн çапăçма пулатăп.

Тăшман пирĕн çĕршыв çине вăрçăпа тухсассăн, эпир тăшмана пĕр хĕрхенÿсĕр аркатса тăкăпăр. Эпĕ, Хĕрлĕ Çар ретĕнче дисциплинăллă та паттăр пулăп,—тенĕ.

Лев Михайлов Хĕрлĕ Çар ретĕнче хăйĕн пĕлĕвне кунран-кун ÿстерсе пынă. Хĕрлĕ Çар ăна паттăр та хăюллă воин туса çитĕнтернĕ. Вăрçă тухсан вăл хăйĕн юлташĕсемпе пĕрле çапăçăва хăюллăн кĕнĕ.

Пĕррехинче 5 сехет хушши хаяр çапăçу пынă. Тăшман çапăçăва пехота тата танксем чылай кĕртсе янă. Паттăр воинсем тăшманăн 65 салтакĕпе офицерне тата 4 танк пĕтерсе тăкнă. Пысăк çухатусем тÿссе, противник каялла чакнă. Çапла, совет воинĕсем гитлеровецсен атакисене сирсе янă.

Каçалапа тăшман каллех наступлени пуçланă. Вĕсем Михайловсен группинчен 3—4 хут йышлăрах пулнă. Çав вăхăтра Михайловăн икĕ юлташĕ вилмеллех аманнă. Михайлов юлташ çухалса кайман.

— Хам виличчен пĕр утăм та каялла чакмастăп. Эпĕ тăван колхозниксене тăшманпа юлашки юн тумламĕ юлмиччен çапăçма сăмах панă. Ăна пурнăçлатăп,—тенĕ вăл. Вăл нумай гранатăсем хатĕрлесе хунă, хăйĕн автоматне çирĕп тытса тăшман çывхарасса кĕтсе тăнă. Нимĕçсем Михайловран 30—40 метра çеç юлнă. Çав хушăра вăл автоматран персе гитлеровецсене пĕрин хыççăн теприне пĕтерсе тăкнă. Анчах унăн патронсем пĕтсе çитнĕ. Тăшман çаплах малалла талпăннă. Михайлов тăшман çине гранатăсем вăркăтнă. Тăшман каялла чакнă. Михайлов инçех мар нимĕç офицерĕ хăйĕн аманнă аллине çыхса тăнине курнă. Вăл ăна тыткăна илнĕ те командный пункта илсе пынă.

Çав çапăçура Лев Михайлов пĕр пĕччен 35 нимĕç салтакĕпе офицерне вĕлерсе тăкнă.

Нимĕç захватчикĕсене хирĕç пыракан вăрçă фронтĕнче Командованин боевой заданийĕсене кăтартуллăн пурнăçа кĕртнĕшĕн тата çапăçура паттăрлăхпа хăюлăх кăтартнăшăн ССР Союзĕн Верховный Совет Президиумĕ Лев Михайлович Михайлов юлташа Хĕрлĕ Çăлтăр орденĕпе наградăланă.

Правительствăн орденне илнĕ хыççăн Лев Михайлов хăйĕн аппăшĕ—военфельдшер Лидия Михайлова патне çакăн пек çыру янă:

— Тăшманпа паттăррăн кĕрешнĕшĕн мана правительство наградине пачĕç. Малашне эпĕ татах та хăюллăрах çапăçăп. Эсĕ те тăшмана çапса аркатассишĕн мĕнпур вăйна хурса кĕреш!

В. ВЕСЕЛОВ.

Шупашкарти эрех завочĕ февраль уйăхĕнчи плана срокчен пурнăçларĕ

Шупашкарти эрех завочĕ февраль уйăхĕнчи производство планне Хĕрлĕ Çар 25 çул тултарнă тĕле тултарма обязательство илнĕччĕ. Хĕрлĕ Çарăн чаплă çĕнтерĕвĕсемпе хавхаланса, завод коллективĕ февральти плана срокчен 8 кун малтан — февралĕн 20-мĕшĕнче пурнăçларĕ.

Февралĕн 16-мĕшĕнче заводра Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртура виççĕмĕш вырăн йышăннă ятпа рабочисемпе служащисен тата инженерла-техникла работниксен митингĕ пулса иртнĕ. Вăл кун тĕлне завод уйăхри плана 63 процент çеç пурнăçланă пулнă. Ăмăртура мала тухнипе хавхаланса, заводри рабочисем юлашки пилĕккунлăхра питех те тухăçлăн ĕçлерĕç. Февралĕн 16-мĕшĕпе 20-мĕшĕ хушшинче уйăхри программăн 37 проценчĕ чухлĕ продукци кăларнă. Çапла вара февралĕн 20-мĕшĕ тĕлне завод уйăхри плана 103 процент ытларах тултарчĕ. Халĕ планран ирттерсе продукци кăлараççĕ.

Фронтовой бригадăн çитĕнĕвĕ

ÇЕМĔРЛЕ. (Хамăр корр.). Комбинатри Клара Цеткин ячĕпе тăракан фронтовой бригада Хĕрлĕ Çар 25 çул тултарнă куна ĕçре çитĕнÿ тунипе кĕтсе илчĕ. Бригада февраль уйăх программине ытлашшипех тултарчĕ. Халĕ вăл планран ирттерсе продукци туса кăларать. Стахановка М. Сапарова куллен виçĕ норма, А. Пятрушенко, А. Лесина, О. Пронина, А. Антрохова, А. Грачева—2,5 норма туса ĕçлеççĕ. Вĕсем пурте Хĕрлĕ Çар кунне уйăх планне 2 хут ирттерсе тултарнипе кĕтсе илчĕç.

Патриотсен çемьи

Николай Максимович 66 çула çитнĕ ĕнтĕ. Вăл Шăхасан районĕнчи «Молодой колхозник» колхоз членĕ, колхозри стахановец. Николай Максимович 1942-мĕш ялхуçалăх çулĕнче колхозра ĕçлесе пĕччен 699 ĕçкунĕ тунă. Унăн тăватă ывăлĕ Хĕрлĕ Çар ретĕнче отечественнăй аслă вăрçă фрончĕсенче фашистла оккупантсене хирĕç паттăррăн кĕрешеççĕ. Николай Максимович хăйĕн ывăлĕсем Хĕрлĕ Çара юрăхлă пулнишĕн савăнать. Колхоз производствинчи ĕçе вăл яланах тĕплĕн туса пырать.

— Манăн ывăлсем çĕршывăн тăшманĕсене хирĕç хăюллăн кĕрешеççĕ. Вĕсем фронтра тăшмана вутпа çунтараççĕ, эпĕ тылра ĕçпе çапатăп. Ĕçленĕçемĕн ĕçлес килет,— тет ватă колхозник Николай Максимов.

Максимов юлташ нумаях пулмасть 1943-мĕш çулшăн государствăна аш-какай, çăм тата укçатенкĕ парăмĕсене парса татрĕ. Тÿрĕ кăмăлпа ĕçлесе перекетленĕ хăйĕн укçи-тенкинчен танксен «Колхозник Чувашии» колоннине тума 1000 тенкĕ панă, Хĕрлĕ Çар фондне 6 пăт тырă хывнă.

Максимов колхозникăн арăмĕ Ирина Максимова та колхозра активлăн ĕçлет. Иртнĕ çулта вăл 190 ĕçкунĕ ĕçлесе тунă. Вĕсен хĕрĕ Мария Николаева Шăхасанти «Сталь» промартельре ĕçлет. Вăл та стахановка. Ĕç нормине куллен 300 процент тултарать.

Пĕр çемьерен тăваттăшĕ отечественнăй вăрçă фрончĕсенче, виççĕшĕ тылра тăван çĕршывăн аслă чыслăхне хÿтĕлеççĕ

В. Я.

Старши военфельдшер Федора Гайкина

Август уйăхĕн юлашки кунĕсем. Çурçĕр-Хĕвеланăç фрончĕн пĕр участокĕнче хĕрÿллĕ çапăçусем пынă. Снарядсемпе минăсем шартлатса çурăлнинчен, пульăсем пăр пек çуса тăнинчен кĕç-вĕç çĕр çурăлассăн туйăннă. Хĕрнĕ сывлăшран тар шăрши çапнă, йĕри-таврах ялкăшса çуннă, тавралăха çулăм çавăрса илнĕ. Çак тамăкри пек хăрушă вырăнтан хăтăлса тухма питех те йывăр пулнă. Совет воинĕсем тăшманăн йышлăрах вăйĕсене хирĕç паттăррăн çапăçнă. Чăваш халăхĕн хĕрĕ военфельдшер Федора Афанасьевна Гайкина çакăн пек хăрушă та хаяр çапăçура малтанхи хут пулнă.

Мирлĕ вăхăтра Федора Гайкина спортпа хытă интересленнĕ. Районра вăл лайăх физкультурница шутланнă. Спорт енĕпе нумай çулсем хушши тренировкăсенче пулни халĕ шăпах тем пекех кирлĕ пулса тухрĕ. Пластунла хăвăрт шума тата хăвăрт чупма пĕлни, хастарлăхпа иксĕлми вăй — çаксем ăна хĕрÿллĕ тытăçусем вăхăтĕнче чылай пулăшрĕç. Хăрушлăх çинчен йăлтах манма тăрăшса, хăйĕн пурнăçне шеллемесĕр, чăваш халăхĕн хăюллă хĕрĕ фельдшер Гайкина вилĕме хирĕç, çапăçу хирне геройла кĕнĕ. Унтан Федора аманнă красноармеецсене пĕрин-хыççăн теприне йăта-йăта тухнă.

Снарядсем паçăрхи пекех хăрушшăн кĕрлесе çурăлнă. Çĕр чĕтреннĕ. Снаряд алтнă лапамсемпе шăтăксенче тăван юлташсем — аманнă боецсем пулăшу кĕтсе выртнă. Вĕсем, вăйсăрланнăскерсем, хуллен çеç: сестра... шы-ыв! ... Сестра, çĕкленме пулăшăр-ха...—тесе чĕннĕ.

— Пур çĕре те ĕлкĕрес пулать,— каласа парать Федора Афанасьевна. — Аманнă юлташа çурăм çине хуратăн та çĕр çуммипе хăвăрттăн шăватăн, теприне плащ-палатка çине хурса сĕтĕретĕн... Акă йывăр аманнă лейтенант выртать (каярахпа унăн хушаматне те пĕлтĕм — Корытников). Юн юхнипе вăл тăнне çухатнă. Çапăçу хирĕнчен илсе тухиччен вилме те пултарать. Эпĕ ăна хÿтĕ вырăна йăтса кĕретĕп те васкавлăн унăн суранне çыхатăп. Анчах ку та пулăшмарĕ: вăйĕ пĕтнĕскерĕн куçĕсем хуралса килеççĕ. Ăна çак самантрах юн памалла. Инкек çине синкек сиксе тухрĕ: консервланă юнăн запасĕ шăпах пĕтсе çитнĕ. Мĕн тăвас? Пĕр çаланăç кăна — ăна хамăн юнăма парас пулать. Санитар пулăшнипе эпĕ аманнă лейтенанта хамран 200 грамм юн патăм. Темиçе минутăран вăл хускалма тытăнчĕ. Юн унăн пурнăçне çăлса хăварчĕ.

Çапăçура пĕрремĕш хут пулсах, Гайкина юлташ çапăçу хирĕнчен аманнă 35 боеца йăтса тухнă. Чăваш хĕрне çак мухтава тивĕçлĕ малтанхи ĕçĕшĕн командовани тав тунă.

Федора Афанасьевăна вăл каç çывăрма май килмерĕ. Вăл çĕрĕпех аманнă красноармеецсене куçарнă çĕрте ĕçлерĕ. Кăшт çутăла пуçласанах каллех хĕрÿллĕ те хаяр çапăçусем пуçланчĕç. Каллех пулеметсемпе минометсем хаяррăн калаçма пуçларĕç, хурçă штыксем çуталчĕç. Каллех çак пысăках мар, анчах çирĕп шăмшаклă Федора Гайкина совет воинĕсемпе пĕрле. Снаряд çурăлнипе нимĕнле сас-чĕвве те илтме çук, анчах унăн харсăр аллисем аманнă юлташсен суранĕсене хăвăрттăн çыха-çыха хураççĕ. Хĕрÿ чĕреллĕ патриотка вĕсене çапăçу хирĕнчен йăта-йăта тухрĕ. Çапăçăва кĕнĕренпе кĕçех икĕ талăк çитет ĕнтĕ. Пĕтĕм шăм-шак ывăннă, час-часах куçхупаххисем йывăрланса килеççĕ. Анчах Тăван çĕршыва юрăтни çаксене йăлтах мантарать. Ун чухне Федора Гайкина урăх нимĕн çинчен те мар, аманнă красноармеецсене çапăçу хирĕнчен хăвăртрах çăлса кăларасси çинчен çеç шутланă. Çак кун вăл çăлса хăварнă аманнă красноармеецсен хисепĕ çумне татах 34 çын хутшăннă, виççĕмĕш кун вара вăл çăлса хăварнă красноармеецсен хисепĕ 98 çынна çитнĕ.

Çакăн пек геройла ĕçсемпе пуçланă фронтри пурнăça Федора Гайкина.

Федора Афанасьевна Гайкина юлташăн фронтри пурнăçĕнче çакăн пек эпизодсем вуншарăн шутланаççĕ.

Чăваш халăхĕн мухтавлă хĕрне, парти членне Гайкина юлташа Совет Правительстви пысăк хисеп турĕ. Отечественнăй аслă вăрçă фрончĕсенче геройлăхпа паттăрлăх кăтартса çапăçнăшăн ăна Ленин орденĕпе Хĕрлĕ Çăлтăр орденĕ парса наградăланă.

Федора Афанасьевна Гайкина — Вăрмар районĕнчи Ыхра-Çырми ялĕнчен. Вăл чухăн çын хĕрĕ. Çамрăк чухне ашшĕпе кĕтÿ кĕтнĕ, хĕлле шкулта вĕреннĕ. Совет влаçĕн тивлечĕпе вăл фельдшерсен шкулĕнчен вĕренсе тухнă. Отечественнăй аслă вăрçăн малтанхи кунĕсенчех, вăл хăйĕн икĕ ачине киле хăварса, хăйĕн ирĕкĕпе мухтавлă Хĕрлĕ Çар ретне тăнă. Çара кайиччен Сĕнтĕрвăрри больницинче ĕçленĕ.

Нумай пулмасть ВКП(б) Сĕнтĕрвăрри райкомне Гайкина юлташ фронтран çакăн пек телеграмма янă:

«Эпĕ, чăваш халăхĕн хĕрĕ, коммунистсен партийĕ пăхса çитĕнтернĕскер, отечественнăй аслă вăрçăн малтанхи кунĕсенчех пирĕн партипе правительство чĕннипе хамăн ирĕкĕмпе Хĕрлĕ Çар ретне тăтăм. Командовани мана пысăк тивĕçлĕх пачĕ — аманнă боецсене çăлса кăларас тĕлĕшпе çине тăрса ĕçлеме хушрĕ. Тăван çĕршыв умĕнчи, Хĕрлĕ Çар умĕнчи тивĕçе эпĕ чыслăн пурнăçласа пытăм. Правительство манăн пĕчĕк ĕçех пысăккăн хакларĕ — чăваш хĕрне Ленин орденĕпе Хĕрлĕ Çăлтăр орденĕ парса наградăларĕ. Çав наградăпа хавхаланса, эпĕ малашне татах та хăюллăнрах кĕрешме пулатăп»

Мухтав сана, чăваш халăхĕн хăюллă хĕрĕ!

А. ЧИРКОВА.

ТАСС ОПРОВЕРЖЕНИЙĔ

Çак кунсенче Англи хаçачĕ «Санди диспетч», унăн хыççăн Германипе Итали радиостанцийĕсем Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсене, тепĕр пĕлтерÿсем тăрăх, Кăнтăр Америкăна совет çар миссине яни çинчен пĕлтерÿ сарнă. Хăшпĕр пĕлтерÿсенче çав çар миссине маршал Тимошенко ертсе пырать тесе пĕлтернĕ.

Çав пĕлтерÿсем пĕтĕмĕшпех суя пулнине пĕлтерме ТАСС полномочи илнĕ. Тимошенко ертсе пыракан е унсăр тăракан нимĕнле çар миссине те Пĕрлешÿллĕ Штатсене те, Кăнтăр Америкăна та яман.

Ют çĕршывсенче

СОВЕТ ВОЙСКИСЕМ ТĂВАКАН НАСТУПЛЕНИ ПИРКИ КИТАЙРА МĔН КАЛАÇÇĔ

ЧУНЦИН, февралĕн 21-мĕшĕ. (ТАСС). Хĕрлĕ Çар тунă çитĕнÿсемпе пĕтĕм çĕршыв интересленет. Совет войскисем çĕнтерÿллĕ наступлени туса пыни çинчен пичет питĕ анлăн çырса пĕлтерет. Сентрал ньюс агентстви пĕлтернĕ тăрăх, совет войскисем Харькова йышăнса илни çинчен пĕлтернине Чунцинра çав тери хавасланса, çав тери хĕпĕртесе йышăннă. Советсен çĕнтерĕвĕсем çинчен пĕлтерекен плакатсене пĕтĕм хулипе çыпăçтарса тухнă. Совет войскисен çĕнтерĕвĕсем пирки «Чжунянь жибао» çапла çырать: «Харькова йышăнса илни çинчен пĕлтерсен, эпир хĕпĕртенине каласа пама та йывăр. Мускава, Сталинграда, Кавказа çавăрса илсе, вăраха пыракан вăрçă валли тырă тата нефть запасĕ тăвас тесе Гитлер ĕмĕтленнисем пĕтĕмпех путланса ларчĕç».

«Синьхужибао» хаçат каланă тăрăх, «Адольф Гитлер», «Райх», «Великая Германия» ятлă дивизисене çĕмĕрсе тăкни Гитлер пуç пулса тăракан фашистла Германин пуласлăхне пĕтерет. Хĕрлĕ Çар хăй 25 çул тултарнă уяв тĕлне нимĕç агрессорĕсене çĕмĕрсе пырса совет çĕршывне вĕсенчен тасатас тĕлĕшпе Сталин панă приказа чаплăн пурнăçлать.

Харькова илни çинчен çырса «Шишисиньбао» хаçат çапла пĕлтерет: Харьковшăн пынă çапăçура чи интересли — Францирен хăваласа пынă «Адольф Гитлер», «Райх», «Великая Германия» текен танковăй тата моторизованнăй дивизисем пĕтни пулса тăрать. Харьковри хăйĕн гарнизонĕн вăйне шанмасăр хулана хÿтĕлеме Гитлер суйласа илнĕ дивизисене янă. Çав дивизисем пĕтнĕ пек малашне Германин пĕтĕм войскисем пĕтмелле.

ÇУРÇĔР АФРИКĂРИ ВĂРÇĂ ĔÇĔСЕМ

ЛОНДОН, февралĕн 21-мĕшĕ. (ТАСС). Официально йĕркепе пĕлтернĕ тăрăх, союзниксен войскисем Уссельтиян районĕнче хăйсен малти позицийĕсене хăварса сăртсен хĕвеланăç еннелле чакнă.

Союзниксен линийĕ халĕ Медже —Эль-Бабаран кăнтăрарах тата 80 миля хушши сăртсем çумĕпе Алжир граници таран, Ферианăран çурçĕрхĕвеланăçнелле выртать.

ЧАН КАЙ-ШИ АРĂМĔ ВАШИНГТОНА ПЫНА

ЛОНДОН, февралĕн 19-мĕшĕ. (ТАСС.) Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Вашингтона Чан Кай-ши генералиссимусăн арăмĕ пынă. Ăна США президенчĕ Рузвельт йышăннă. Америка конгресĕн икĕ палатин пĕрлешÿллĕ ларăвĕнче Чан Кай-ши арăмĕ сăмах тухса каланă.

ФРАНЦУЗСЕН ПУР ХАÇАТ РЕДАКЦИЙĔСЕНЕ ТЕ НИМĔÇСЕМ ХĂЙСЕН КОНТРОЛЕРĔСЕНЕ ЛАРТНĂ

НЬЮ-ЙОРК, февралĕн 18-мĕшĕ. (ТАСС). „Нью-Йорк таймс" хаçатăн Берндри корреспонденчĕ пĕлтернĕ тăрăх, Франци хаçачĕсен пур редакцийĕсене те тата пур типографисене те нимĕçсем хăйсен агенчĕсене лартнă. Корреспондент пĕлтернĕ тăрăх, çакă вăл Франци хаçачĕсен ăшчиккине нумаях улшăнтарас çук, мĕншĕн тесен вăл хаçатсем çав-çавах тĕнĕл держависенчен тухакан пĕлтерÿсене кăна пичетлеççĕ.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

Çыхăну Халăх Комиссариачĕн Шупашкарти Конторине çакăн пек работниксем кирлĕ: радиоузел надсмотрщикĕсем, телеграфистсем, телеграммăсене леçсе паракансем, хула тăрăх корреспонденцисем салатса çÿрекен почтальонсем, шоферсем, истопниксем, конюхсем, сортировщиксем тата телеграф, почта, радиоузел ĕçне вĕренекен учениксем.

Çак адреспа ыйтмалла: Шупашкар, Çыхăну çуртĕ, кадрсен отделĕ. Тел. 2—74 2—1

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн—0—67, редакци секретарĕн—4—26, промышленность пайĕн—3—99, ялхуçалăх пайĕн—5—31, издательство конторин—0—23.

НТ 657 Типография № 1, Управления полиграф промышленности при СНК ЧАССР. Заказ № 2 Ф. 6. 58. 42 п.